Çапла вара, çыру иккĕмĕш чĕлхене вĕрентмелли паха никĕс. Вăл калаçăва вĕрентмелли хатĕр выранĕнче. Шкул практикинче çыру ĕçĕсене ирттернĕ чухне кашнийĕ хăш тĕллевсене пурнăçлама пулăшнине, мĕнлерех ăслай-хăнăхусене çивĕчлетме кирлине шута илмелле. Чăваш чĕлхи урокĕнче çыру ĕçĕсене тĕллевлĕн ирттермелле.


*Литература*

1. Львов М.Р. Словарь-справочник по методике русского языка. М.: Просвещение, 1988. 240 с.
2. Рождественский Н.С., Кустарева В.А. Методика начального обучения русскому языку. М.: Просвещение, 1965. 347 с.
3. Чăваш чĕлхи: Тĕрлĕ чĕлхеллĕ шкулăн вĕренӳ планĕпе ĕçлекен I-IV классен программи. Вĕренекенсен пĕлĕвĕпе хăнăхăвĕсене тĕрĕслемелли тата хакламалли виçесем. Шупашкар: Чăваш. кĕн. изд-ви, 1994. 64 с.
4. Шабанов А.И., Величук А.П., Бажанова Е.А. Методические рекомендации по развитию речи учащихся начальной национальной школы с русским языком обучения/ НИИ нац. школ МП РСФСР. М., 1975. 88 с.
5. Шардаков М.Н. Очерки психологии школьников. М.: Учпедгиз, 1955. 263 с.



В.Г.Хлебникова

Чувашский педагогический университет,

г. Чебоксары


## ВЫРĂС ШКУЛĔНЧЕ ЧĂВАШ ЧĔЛХИ УРОКĔСЕНЧЕ Н.И.АШМАРИН ПУРНĂÇĔПЕ ТАТА ПУЛТАРУЛĂХĔПЕ ПАЛЛАШТАРАССИ

Вырăс шкулĕнче чăваш чĕлхи вĕрентессин тĕп тĕллевĕ – вĕренекенсен çыхăнуллă пуплевне аталантарасси, вулама-çырма вĕрентесси.

Программăра кашни класра тенĕ пекех чăваш халăхне çутта кăлараканĕпе И.Я.Яковлевпа, унăн ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарма палăртнă. Чылай ăсчахсем (В.Г.Егоров, Н.Г.Краснов т.ыт.те) Н.И.Ашмарина, унăн чăваш халăхĕшĕн питĕ нумай пархатарлă, хаклă ĕçсем тунине шута илсе, И.Я.Яковлевпа пĕр танах пулма пултарать тесе хак параççĕ. Сăмахран, В.Г.Егоров

çапла çырать: «В истории культурного развития чувашей имя Н.И.Ашмарина справедливо может быть поставлено рядом с именем основоположника чувашской письменности и крупного деятеля по народному образованию чувашей Ивана Яковлевича Яковлева» [1. С. 9].

8 класра «Чăваш сăмахĕ» кĕнекене Н.И.Ашмарин çинчен ятарлă текстсем кĕртнĕ. Текстсене вуласа тишкернĕ чух ачасем определени, хутлă предложени, паллă ячĕсен танлаштару формисем çинчен, сăмах майлашăвĕсем çинчен вĕреннине аса илеççĕ. Унччен маларах Н.Никольский çырнă «Чăваш характерĕ», «Чăваш хĕрарăмĕ», «Чăвашла мансан», П.Хусанкай çырнă «Эп – чăваш ачи», М.Юхма çырнă «Хаклă çĕрĕм-шывăм тата ытти хайлавсем, Н.И.Ашмарин çинчен, унăн тĕпчев ĕçĕсем çинчен калаçма май туса параççĕ.

Вырăс шкулĕсенче ирттерекен «Чăваш сăмахĕ» (I-IV классенче), «Чăваш чĕлхи» (V-IX классенче) урокĕсем – хутăш уроксем, пĕр урокрах вĕренекенсем вулав тата грамматика материалĕпе паллашаççĕ, вĕсене çирĕплетеççĕ, çыхăнуллă пуплеве аталантармалли хăнăхтарусем пурнăçлаççĕ, тĕрĕслев ĕçĕсем ирттереççĕ. Вĕрентӳ кĕнекисенче ачасем пурнăçламалли ĕçсене е вырăсла, е чăвашла çырса панă. Акă «Николай Ашмарин» текстпа ĕçленĕ чух авторсем çакăн пек ĕçсем ирттерме сĕннĕ: 6-мĕш хăнăхтару. По аналогии с данным текстом составь краткий биографический очерк об известной вам исторической личности. Вĕренекенсем 3-мĕш параграфра «Чăваш ятне çĕклекенсем» пая кĕрекен хайлавсене вулаççĕ, «Выражение времени действия» грамматика материалĕпе паллашаççĕ: кунта глаголсен хальхи вăхăчĕ, пурлă тата çуклă формăсем, хальхи вăхăтри глаголăн пĕлтерĕшĕсем çинчен, причастисем çинчен, глаголсем тĕрлĕ пуплев пайĕсенчен мĕнле аффикссем хушăннипе пулни çинчен вĕренекенсем пĕлӳ илеççĕ. Вулама çак текста кĕртнĕ: «Н.И.Ашмарин – хăй çинчен». Статьяна (ăна ученăй 1919 çулхи раштав уйăхĕн 29-мĕшĕнче çырнă) вуланă чух унăн

пурнăçĕпе тата сумлă ĕçĕсемпе тĕплĕнрех паллашаççĕ. [2.С.51].

Ку урокăн тĕллевĕсем: 1. Н.И.Ашмарин пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа вĕренекенсен пĕлĕвне анлăлатасси, тарăнлатасси. 2. Н.И.Ашмарин – чăваш ятне çĕклеме пулăшакан ăсчах пулнине ăнланма пулăшасси. 3. Н.И.Ашмарин И.Я.Яковлев пекех чăваш халăхне çутта кăларас, унăн культурине ÿстерес ĕмĕтлĕ çын пулнине кăтартасси. 4. Вĕренекенсене халăхшăн пархатарлă ĕçсем тăвакан çынсене хисеплеме вĕрентесси. 5. Н.Ашмарин пурнăçĕ урлă чăваш халăхĕн ăс-хакăлĕн аталану çулне кăтартасси.

Урока кирлĕ хатĕрсем: Н.И.Ашмарин портречĕ, ун çинчен хатĕрленĕ бюллетень, кĕнекисенчен йĕркеленĕ выставка, И.Я.Яковлев Н.И.Ашмарин çинчен аса илнине çырнă магнитофон ленти, «Н.И.Ашмарин пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ» ятлă хронологи таблици, тест ыйтăвĕсемпе хуравĕсем.

Урока çакăн пек йĕркелеме пулать: 1. Вĕренекенсене урок темипе тата тĕллевĕсемпе паллаштарасси. 2. Кÿртĕм калаçу. Учитель вĕренекенсем вĕсем Н.И.Ашмарин çинчен мĕн пĕлнине ыйтса пĕлет, портретне кăтартать, словарь ĕçĕ irттерет (сăмахсене малтанах доска çине çырса хунă, занавескăпа хупланă, халĕ ăна уçать. Кунта çак сăмахсем:

хам тĕллĕнех – самостоятельно

питĕ вăрах вăхăт хушши – очень долгое время

ман ĕçĕмĕн тĕллевĕ – цель моей работы

пулманпа пĕрех – было очень мало

чăнласах чухлакан пултăм – действительно стал понимать

хавхалантарать – воодушевляет, вдохновляет

Вĕренекенсем çĕнĕ сăмахсене тĕрĕс калама вĕренеççĕ, хăйсен словарикĕсем çине çырса хураççĕ.

3. Текста пĕрремĕш хут вулани. Учитель е лайăх вулама пултаракан ача текста пĕрремĕш хут пĕтĕмпех (сыпăксем çине пайламасăр) вуласа парать.

4. Текста вĕренекенсем ăнланнипе ăнланманнине тĕрĕслес шутпа 1-2 ыйту парать: 1) Н.И.Ашмарин кам пулнă? 2) Вăл ăçта çуралнă?

5. Текста ачасене вулаттарни.

6. Суйлавлă вулав. 1) Н.И.Ашмарин чăваш чĕлхипе мĕнле, кам пулăшнипе паллашма пуçлани çинчен тупса вуласа парăр. 2) Вăл хăçан чăваш чĕлхине чăнласах чухлакан пулни çинчен калакан вырăна тупăр. 3) Н.И.Ашмарин мĕнле кĕнекесем пичетлесе кăларни çинчен тупса вуласа парăр.

7. Çирĕплетес тĕллевпе хăнăхтарусем пурнăçлани.

I-мĕш хăнăхтару [2. С. 75]. Восстанови деформированный план текста.

1. Ман ĕçĕмĕн тĕллевĕ.
2. Чăваш чĕлхине чăнласах чухлакан пултăм.
3. Эпĕ ăçта çуралнă?
4. Чăваш чĕлхипе паллашма тытăнтăм.
5. Эпĕ пичетлесе кăларнă ĕçсем.

2-мĕш хăнăхтару. Перескажи содержание текста от 3 лица. Пересказ начинай так: Николай Иванович Ашмарин Хусан кĕпĕрнин Етĕрне хулинче 1870 çулхи сентябрĕн 22-мĕшĕнче çуралнă...

3-мĕш хăнăхтару. Составь 5-6 предложений с глаголами настоящего времени.

4-мĕш хăнăхтару. Из текста выпиши глаголы, определи их время, лицо, число.

8. Хронологи таблиципе ĕçлесси.

9. Вĕренекенсене Н.И.Ашмарин кĕнекисенчен йĕркеленĕ выставкăпа паллаштарасси.

10. И.Я.Яковлевпа Н.И.Ашмарин туслăхĕ çинчен вĕренекенсем доклад туни.

И.Я.Яковлевăн «Манăн пурнăç» ятлă кĕнекинчен илнĕ сыпăка магнитофон ленти çине çырнине вĕренекенсене итлеттересси.

По воспоминаниям воспитанников Симбирской чувашской учительской школы, Н.И.Ашмарин приезжал к ним за собранными материалами во время каникул обычно в конце августа или в начале сентября каждого учебного года. Материалами по народной

словесности чувашей в течение ряда лет ученого обеспечивали учащиеся и учителя Симбирской чувашской школы.

11. Тест заданийĕсемпе ĕçлесси. [3. С. 78].

1) Николай Иванович Ашмарин 1870 çулта çуралнă, 1933 çулта вилнĕ.

а) тĕрĕс

ă) тĕрĕс мар

б) пĕлместĕп.

2) Чăваш культурине тĕнче шайне çĕкленĕ вырăссем:

а) Н.И.Лобачевский

ă) А.Н.Крылов

б) Н.И.Ашмарин

в) пурте тĕрĕс

г) пĕри те тĕрĕс мар.

3) Тăван чĕлхене вĕренмен чăваш чăн-чăн культура картишне кĕреймест. Раççей патшалăхне тĕрек паракан халăхсен культури пуянлăхне курманнисене аăрхаттарса кам çапла каланă: «Вĕренекенсене амлбăсем мĕнле тăраннине, çĕленсемпе шапасем мĕнле майпа ĕрченине, эрешменĕн миçе ура пуррине пĕлме хистеççĕ... Тен, кăна пĕлнин те усси пур пуль. Анчах тăван чĕлхене пĕлнинчен кирлĕрехххи этемшĕн мĕн пултăр? Тăван чĕлхе – халăхăн асլăран та аслă ăс-хакăл пуянлăхĕ».

а) Н.Я.Бичурин

ă) И.Я.Яковлев

б) Н.И.Ашмарин.

(Хуравсем: 1 – а; 2 – в; 3 – б; 4 – ă; 5 – ă; 6 –ă).

12. Урока пĕтĕмлетни. Оценкăсем лартни.

13. Киле ĕç. Вĕрентӳ кĕнекинче 91 страницăра «Вопросы для проверки речевых умений и навыков» пайри 7, 8 ыйтусене хуравлама хатĕрленмелле. (7-мĕш ыйту. Н.И.Ашмарин чăваш чĕлхипе паллашма хăçан тытăннă? 8-мĕш ыйту. Н.И.Ашмарин мĕн ятлă кĕнекесем çырнă?).

2. «Темы для составления устного монолога» пайри 3-мĕш ыйтăва хурав памалла: 3-мĕш тема. Н.И.Ашмарин – чăваш чĕлхи тĕпчевçи.

IX класра «Чăваш чĕлхи» урокĕнче [4.С.59]. «Сколько языков ты знаешь, столько раз ты человек» (авалхи латинсем каланинчен) темăпа ĕçленĕ чух Н.И.Ашмарин, И.Я.Яковлев нумай чĕлхе пĕлни çинчен, нумай чĕлхе пĕлнин усси, пĕлтерĕшĕ çинчен калаçу ирттереççĕ, вĕренекенсене хăйсене тĕслĕхсем туптараççĕ. Унтан I-мĕш хăнăхтарăва пурнăçлаççĕ.

Ыйтусене хуравлăр.

1. Нумай чĕлхе пĕлекен çынна мĕн теççĕ? 2. Нумай чĕлхе пĕлни çынна пурнăçра пулăшать-и? 3. Эсир мĕнле те пулин полиглот çинчен вуланă-и е илтнĕ-и? 4. Вăл кам пулнă (хăш халăх çынни, унăн профессийĕ)?

59 страницăра 3-мĕш хăнăхтарура Ашмарин кам пулни çинчен, ун ятне панă урам çинчен сăмах пырать. Учитель кам вăл Ашмарин, мĕншĕн урама ун ятне панине аса илтерет.

184 страницăра В.Ф.Каховский çырнă «Кам-ха вăл-чăвашсем?» текста вуланă чух ачасем А.Фукс, В.Сбоев, В.Татищев, Н.Ильминский тĕпчевçĕсем чăвашсен тăхăмĕсем çинчен мĕн çырнипе, вĕсен шухăшĕсемпе паллашаççĕ. Каховский Н.И.Ашмарин çинчен те калать: Текста вуласа çирĕплетсен ун хыçĕнче панă ыйтусемпе ĕçлеççĕ.

1-мĕш хăнăхтару. Ыйтусене хуравлăр.

Чăваш историйĕ çинчен эсир мĕн вуланă?

Эсир вуланипе В.Ф.Каховский профессорăн шухăшĕсем пĕре килеççĕ-и?

Чăваш историкĕсенчен эсир кама-кама пĕлетĕр?

2-мĕш хăнăхтару. В.Ф.Каховский асăнакан çынсем пурте пысăк ученăйсем. Вĕсенчен хăшĕ чăвашсене пăлхарсен тăхăмĕ тесе хаклать?

Чĕлхе урокĕсем словарьсемпе усă курмасăр иртмеççĕ. Н.И.Ашмарин пухса хатĕрленĕ «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» вырăс шкулĕсенче ĕçлекен чăваш чĕлхи учителĕсемшĕн те, вĕренекенĕсемшĕн те пысăк

вырӑн йышӑнать. М.Р.Федотов профессор ун пирки ҫапла ҫырать: «Венцом творческой деятельности Н.И.Ашмарина, делом его жизни является Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки – Тезаврус Лингве Чувашорум – Словарь чувашского языка, над которым он работал почти всю свою сознательную жизнь...» [5. С. 18].

Словарь статйипе паллаштарнӑ чух ӑна пысӑклатнӑ таблица евӗр йӗркелесе усӑ курсан лайӑхрах. Вӗренекенсем ӑна кураҫҫӗ, мӗнле усӑ курмаллине асра хӑвараҫҫӗ.

Вӗрентӳ кӗнекисемпе программӑсене авторсем чылай архаизмсем – кивелнӗ сӑмахсем кӗртнӗ. Вӗсемпе халӗ пурнӑҫра питех усӑ курмаҫҫӗ, анчах хайлавсенче, чӑвашсен ӗлӗкхи пурнӑҫне ҫырса кӑтартнӑ чух ҫыравҫӑсем хӑйсен произведенийӗсене ун пек сӑмахсене кӗртеҫҫӗ. Вӗсем ытларах пӳрт-ҫурт таврашӗнче тӗл пулакан сӑмахсене, ҫи-пуҫ, тумтир ячӗсене, савӑт-сапана, ӑстасен ӗҫне-хӗлне пӗлтерекеннисем пулаҫҫӗ. Сӑмахран, 2 класс валли хатӗрленӗ «Чӑваш сӑмахӗ» кӗнекере вӗренекенсем ҫак сӑмахсемпе тӗл пулаҫҫӗ: ӳпле, урапа, шӳлкеме, тухья; «Ӑстасен ҫӗршывӗнче» темӑна вӗреннӗ чух: ҫӑпата, пушӑт, шӗшлӗ, пӑшатан, чӳлмекҫӗ, арманҫӑ, арман; III класра: йывӑҫ эрӗш ӑсти, кӗлет, мӑрье, тӗртнӗ тӗрӗ ӑсти; композиторсем ҫинчен хайлавсем вуланӑ хыҫҫӑн музыка инструменчӗсен ӳкерчӗкӗсемпе ӗҫсем иртттерме сӗннӗ: чӑваш тата ытти халӑхсем музыка инструменчӗсен ячӗсене вула, ҫырса ил. Аяларах страницӑра кроссворд вырнаҫтарнӑ, ӗҫ панӑ: Кунта мӗнле музыка инструменчӗсен ячӗсем пытаннӑ?

Кун пек сӑмахсене, паллах, Н.И.Ашмарин словарӗсӗр ӑнлантараса пама йывӑр. Ҫавӑнпа та учительсем вӗренекенсене ҫак словарьсемпе уроксенче те, килти ӗҫсене пурнӑҫланӑ чух та, класс тулашӗнчи ӗҫсене хатӗрленӗ чух та усӑ курма сӗнеҫҫӗ.

Хӑй ӗмӗрӗнче Н.И.Ашмарин питӗ нумай ҫырнӑ. Вӑл паллӑ тюрколог тата чӑваш чӗлхине тишкермелли наука никӗсне хывнӑ аслӑ ученӑй. Чӑваш халӑх поэчӗ

П.Хусанкай унӑн ӗҫӗсене пысӑка хурса хакланӑ, ҫакӑн пек сӑвӑ халаланӑ:

Ученый русский встал живым укором
Злой силе и, спесивый сбив кураж,
Открыл Тезаврус Лингве Чувашорум –
Сокровищницу, что сберег чуваш!

*Литература*


1. Егоров В.Г. Н.И.Ашмарин. Чебоксары, 1972.
2. Печников О.И. Чӑваш сӑмахӗ. 8 класс валли. Шупашкар: Чӑваш.кӗн. изд-ви, 1999.
3. Григорьев А.Г., Димитриева Н.И., Гаврилова Р.А. V-IX классенче вӗренекенсен пӗлӗвне тӗрӗслесси. Тест заданийӗсемпе хурав материалӗсем. Шупашкар: Чӑваш.кӗн. изд-ви, 2000.
4. Андреев И.А. Чӑваш чӗлхи. 9 класс валли. Шупашкар: Чӑваш.кӗн. изд-ви, 2000.
5. Федотов М.Р. Н.И.Ашмарин. Краткий очерк жизни и деятельности. Чебоксары, 1995.



Э.И.Родионова
Чувашский педагогический университет
г. Чебоксары


## И.Я. ЯКОВЛЕВӐН «МАНӐН ПУРНӐҪ» ХАЙЛАВНЕ ЧӐВАШ ШКУЛӖСЕНЧЕ ВӗРЕНТЕС ЫЙТУСЕМ

Чӑваш шкулӗсенче аслӑ патриархӑмӑрӑн еткерлӗхне, вӑл ҫырнисене тӗрлӗ классенче вӗрентеҫҫӗ. Кӑҫал пичетленсе тухнӑ X класс хрестоматине унӑн «Манӑн пурнӑҫ» ятлӑ аса илӳ жанрӗпе ҫырнӑ хайлавӑн уйрӑм вырӑнӗсене кӗртнӗ. Хӑшӗ-пӗри ҫакна ырласа йышӑнмарӗ. Пӗри хайлава илемлӗ литература мар теме пӑхрӗ. Тепри ӑна кӗҫӗнрех классенче вӗрентме сӗнчӗ. Тавлашӑва хутшӑнмасӑр хайлавра хускатнӑ тӗп ыйтусене пӑхса тухар.

Аслӑ классенче халӑхсем пӗр-пӗринчен чӗлхепе кӑна мар, йӑла-йӗрке, кӑмӑл-сипет, характер тӗлӗшӗнчен те уйрӑлса тӑнине кӑтартни вырӑнлӑ. Ҫак ыйтусене Яковлев хӑйӗн аса илӳ кӗнекинче аван хускатнӑ. Тӗрлӗ халӑх хушшинче нумай ҫул ӗҫленӗскер, вӑл кашни